## Укăлча умĕнче…

Укăлча умĕнче шурă хурăн,
Укăлча умĕнче сирĕн кил.
Хурăнсен айĕнче савнă вырăн,
Тусăм, эсĕ тусна, тусна аса ил.

Улăх урлă, хир-вăрмансем урлă
Варкăшса иртет-и ачаш çил,
Саншăнах эп çепĕç юрă юрлăп,
Тусăм, эсĕ тусна, тусна аса ил.

Вăйăра та, çывăрма выртсан та
Ман умра — шур хурăн, сирĕн кил.
Кирек те ăçта кăна пулсан та,
Тусăм, эсĕ тусна, тусна аса ил.

Тен, унта та пур-тăр шурă хурăн,
Кăтрине лăпкать пуль ачаш çил?
Кунта акă саншăн çунса пурăн —
Тусăм, эсĕ тусна, тусна аса ил.

*Урташ, В. ўкăлча умĕнче… : [сăвă] / В. Урташ // Урдаш, В. Ĕмĕтĕмĕр çитсе пынăран : сăвăсемпе поэмăсем / В. Урташ. – Шупашкар, 1983. – С.80.*